26-17

ВАÇАНККА Н.

# ХАСТАРЛĂХ

(КОМСОМОЛ ЙУРРИ-СĂВВИСЕМ)



ЂĂВАШ
КĔНЕКИ
УЙРĂМĔ

ШУПАШКАР
1926 ÇУЛ

ВАÇАНККА Н.

# ХАСТАРЛĂХ

(КОМСОМОЛ ЙУРРИ-СĂВВИСЕМ).

ПУРĂНĂÇ ТĔРРИ —
— ХАСТАРЛĂХ...
КУНÇУЛĂМĂР —
— КĔРЕШӲ.

**ШАЛАНКĂ**

ЧĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ

ШУПАШКАР — 1926.

Отпечатано в типографии школы Ф.З.У.
Чебоксары. Чувашлит № 1524. Зак. № 288.
Тираж 3000 экз.

## Умсӑмах.

„...Ваҫанккан сӑввисем ҫамрӑксемшӗн питӗ паха пулмалла. Хӑш-хӑш сӑвӑсем кивелме те пуҫланӑ, анҔах вӗсенҔи шухӑшсемпе хӑй вӑхӑтӗнҔе кашни комсомолӗсех ҫуннӑ,—ҫапла вӗсем комсомолӑн паллӑ вӑхӑтне (еписот) кӑтартаҫҫӗ. Ҫитменне, пирӗн ку таранҔҔен те комсомол йурри-сӑввисене пухнӑ йапала ҫук. Кӑна ҫапма кирлӗ пулӗ“.

**Алентей** (РҪЛКС Ҕӑвашопкомӗн Кӗнеке Кӑларакан Комиҫҫи проттоколӗнҔен) 8/IX—25ҫ.

Октӑпӗр револҔутси хыҫҫӑн ӗҫхалӑхӗн кӗрешӗвӗнҔи сасси пур ҫӗре те йанраса ҫитрӗ. Патшапа улпутсен аллинҔен ӗҫлекенсем, ӗҫхалӑхӗ туртса илнӗ йӗркене ҫирӗплетесси, уншӑн кӗрешесси пирӗн саманара нимрен хаклӑ ӗҫ пулса тӑҔӗ. Ҫамрӑксем пинӗ-пинӗпе тӑрса, хӑйсен кӑкӑрӗпе Совет ҫӗршывне сыхлама тухрӗҫ.

Ҫамрӑксен хӑйсен пӗрлешӳ пуҫланса карӗ. Кунран-кунах Комсомол ӳсе пуҫларӗ. Ҕӑваш ҫамрӑкӗсем те, Комсомол йалавӗ тытса, кӗрешӳ ҫулӗ ҫине тухрӗҫ.

Ҕӑваш ҫамрӑкӗсем ҫӗнӗ ҫул ҫине тухнӑранпа питӗ нумай ӗҫ турӗҫ. АнҔах вӗсен тепӗр ӗҫе тума вӑй-хал ҫитерме вӑхӑт тупма май пулмарӗ. Вӗсем

хăйсене кирлĕ кĕнекесене вăхăтра кăларса пырай-марĕç. Пролеттари литтераттурине пуçласа йарас ĕçре те кайа йулђĕç.

Çапах пирĕн комсомол йађђейкисем хăйсен ђун-халне хутсем çине шăратма пуçларĕç. Алăпа çырса шурналсем, хаçатсем кăлара пуçларĕç. Епĕ те Елĕкре 18—19-мĕш çулсенђе çавăн пек шурнал „Вĕлле Хурђĕ“ кăларас тĕлĕшпе ĕçлерĕм, Вăрнарта „Шуçăм“ шурнала пуçласа йатăм т. ыт.

Çав шурналсем çине ун ђухне хамăр вĕренђĕкле ĕçе—комсомол ĕçне хĕрӳллентерме кирлине сăвă-ласа çырса кăтартаттăмăр.

Халĕ ĕнтĕ Ђăваш Комсомолĕн историне вĕрен-ме тытăннă тĕле хам çамрăксемпе ĕçленĕ ђухне çырнă сăвăсене пиђетлесе кăларас, терĕм. Сăвăсене нумайĕшне йе вырăслисен йĕверлĕ кĕвĕлесе çырнă, йе ђăваш йуррисем тăрăх, йе тата куçарнă.

Ку сăвăсем, питех илемлĕ мар пулин те, çырул-лăх çулне шыракан ђунсем те комсомолра пулни çине кăтартĕç, тетĕп.

*Автăр.*

1924-мĕш çул, Шупашкар.

## Çамрăксен Инттернатсионалĕ.

Хастарлă çамрăксем, пĕрлешĕр,
Ушкăнĕпе атăр, тăрăр!
Хамăр алла илер тĕнђенĕн
Йунланнă хĕрлĕ йалавне.
Йулашки йунлă çапăçăва
Ĕретленсе вăрçма тухар;
Вилсен-вилер аттесемпеле,
Йе туртса илер тĕнђене.

*(Хушса йурламалли)*

Çакă пирĕн татăклă,
Йулашки çапăçу;
Инттернатсионалпа
Етем йăхĕ ђĕрĕлет.

Паттăр та, турă та, патша та
Пире никам та çăлас çук;
Ирĕклĕхе епĕр илетпĕр
Хамăрăн çамрăк алсемпе.
Аттесем çапăçса тупнине
Çирĕплетсе хурас тесен,
Йунланнă йалава йăтар та
Вăрçма тухар, вăрçма васкар!

Çакă пирĕн йулашки . . .

Хăватлă, çулăмлă çĕн ушкăн,
Хăвăн хастарлăхна çитер;
Пĕтĕм тĕнђе çамрăкĕсене
Пĕр ĕмĕтпеле пĕрлештер.
Епĕр çеç, пĕрлешсе тухсассăн,
Нуштапа хуйхă ађисем,
Çĕн тĕнђе тума пултаратпăр.
Вырăна кĕђђĕр çĕн ĕмĕтсем.
Çакă пирĕн татăклă
Йулашки çапăçу,
Интторнатсионалпа
Етем йăхĕ ђĕрĕлет.

## Аҭăрха, çамрăксем.

*(„Смело товарищи" кĕввипе)*

Аҭăрха, çамрăксем, васкăр,
Пĕр çĕрелле пуçтарнар;
Пурнăç çулне йусамашкăн
Хамăр вăйпа тытăнар. } *2 хут*
Икĕ çул *) пирĕн аттесем
Ирсĕрлĕхпе çапăçас,
Халĕ хастарăн, çамрăксем,
Епĕр тухар çав вăрçа.
Йунпала тупнă йĕркене
Тем пулсан та тартар мар;
Алăри хĕрлĕ йалава
Çĕре ӳкме парар мар.

---

*) Ун ђухне епĕ кĕрешӳ çулне револютси хыççăнхисене çеç хисепленĕ. „Тахçантанпах" теме йураҭ.

Ĕмĕтре пулнă ĕмĕре
Тинех çитсе курăпăр;
Пăтравлă ирсĕр тĕнђере
Ырă йĕрке тăвăпăр.
Аттăрха, çамрăксем,васкăр,
Пĕр çĕрелле пуçтарнар;
Пурнăç çулне йусамашкăн
Хамăр вăйпа тытăнар. *1919-мĕш çул.*

## Хĕрлĕ çар.

Шурă çарпа хура йунлă парон
Шав йунĕçмĕш патшанах лартасшăн;
*(Хушса йурламалли).*

Анђах тайкаран
Приттансен тинĕсђен
Ђи хăватли пирĕн çар,
Хĕрлĕ çар.
Ан тив пĕрре çарăмăр
Çаннине тавăрнă
Ĕç аллин çивĕђĕ сăннине
Тăшман çине петĕр,
Ак хамăр та епĕр
Тухатпăр татăклă вăрçа! } *2 хут.*
Кай, Хĕрлĕ çар, есĕ кай малалла!
Ирĕклĕхшĕн çеç епĕр вăрçмалла.
Акă тайкаран...
Пĕтĕм тĕнђене вут тĕртсе çунтарар,
Тискер тĕрмепе ђиркçене аркатар...
Акă тайкаран ..

# Комунар йурри.

*(В. Кѣаçĕв сăвви тăрăх).*

Пире нимĕн ѣарас çук: хуйхи те, инкек те...
Турри те тек пире хăратаймĕ;
Нихçанта парăнас çук, нихçанта, нихçанта
Комунарсем ѣура пулса лармĕç.

Ѣаплă та паттăр çемйе—ĕççынни ирĕкре,
Пурте хатĕр комуншăн тăмашкăн.
Ей! Тăшман пур! тесен, комунар, тух! тесен,—
Пурте хатĕр, тухаť çапăçмашкăн.

Тăшман вăйлă пулин—ѣĕтресех тăмăпăр:
Пусмăрлăх йыттисем пăр-р! саланĕç.
Нихçанта парăнас çук, нихçанта, нихçанта
Комунарсем ѣура пулса лармĕç.

Салтаксем çитмесен,—стариксем тухмалла,
Аѣасем, арăмсем те кĕрешĕç;
Ĕççынни—пĕр çемйе, ĕç ѣĕри туймаллах,
Ирĕке кăкăрпа хўтĕлейĕç.

Пире нимĕн ѣарас çук, хуйхи те пусас çук,
Турри те тек пире хăратаймĕ;
Нихçанта парăнас çук, нихçанта, нихçанта!
Комунарсем ѣура пулса лармĕç.

*Мускав, 1925 ç.*

## Кĕрешӳ ҫулĕпе...

(Марҫелйесă кĕвви).

Куҕҕанма, макăрма пăрахар та,
Пурте харăс ĕҫе тытăнар;
Кĕрешӳ вăхăтне асăрхар та,
Пурнăҫа йусама тăрăшар!

Ҫамрăксем кар тухса тытмасассăн,
Ваттисем вăл ĕҫе тăвас ҫук,
Ҫамрăксем пур вăйпа тытăнсассăн—
Кив йĕркен шăрши те йулас ҫук.

(Хушса йурламалли).

Ей, йулташ, ҫаксене
Асăмра тытмалла,
Кĕрешӳ ҫулне шав
Ҫутатса пымалла;
Хастар ҫамрăксем,
Пурте кар-р! тăрар,
Васкар, васкар, васкар.

Илемлĕ ҕеҕеке шеллемесĕр
Таптаса, амантса пĕтернĕ;
Хастар ҫамрăк ҕунне пĕлеймесĕр
Ăна шав айăккалла сирнĕ.

Пĕҕĕкренех ĕҫе вĕренмесессĕн,
Йăнăшсем, шăйрăксем пулмасан,—
Ҫамрăк, тӳрĕ ҫула ес тупаймăн,
Пурнăҫа та пĕлсе ҫитеймĕн.

(Хушса йурламалли).

Çамрăксем, çаксене
Шат асра тытмалла;
Пирĕн ђун вĕресе,
Çĕнелсе пымалла;
Хастарлăхпала
Ђĕр вăйа пухар,—
Васкар, васкар, васкар!

Акă хаљ ĕçђен çын пурĕ пĕрле тăђĕ,
Ирсĕре тĕнђерен хăвалаť,
Хăйне хăй шеллемесĕр пикенђĕ—
Коммунисăм çуртне вăл тăваť.

Çĕнĕ пурнăç тăвасси пит инçе те мар,
Ĕçхалăхĕ тинех ђура мар,
Çавăнпа хĕрӳ ђух тăрăшса пымалла,
Пĕр пулса кĕрешме тухмалла.

(Хушса йурламалли.)

Ей, йулташ, çаксене...

Мĕн пур пек çамрăка çĕнĕ пурнăç ђĕнет,
Çавăнпа пурсăмăр пĕрлешер;
Ĕçпеле пиçнĕскер, пирĕн ђуннăмăр тӳсет,
Нушана тĕппипех сирпĕтер.

Хамăра ушкăнра вĕрентсессĕн,
Нимĕнрен те епĕр хăрас çук,
Çаксене тăнласа илейсессĕн
Хаљ канас-ха, тесе тăрас çук.

(Хушса йурламалли):

Çамрăксем, çаксене...

*Вăрнар, 1920 ç.*

## Есĕр çамрăклах...

*(Пытару маршĕ)*

Есĕр çамрăклах халăха йуратса,
Ђăнлăхшăн çапăçса вилсе выртрăр;
Мĕн пур пек вăйпа, пит хастарăн тăрса
Ирĕклĕх йалавне çирĕп тытрăр.
Мăшкăлри çамрăка кун парасђĕ тесе,
Кулленех çĕкленсе тăрайсатăрђĕ есĕр,
Мĕн пур халăха пулăшасђĕ тесе
Пуçлăхсен тытăмне урлă илтĕр.
Хăш ђухне çакланса, тўресен ырлăхпе
Сивĕ нўр тĕрмене кĕрсе лартăр;
Тўсме çук мăшкăлпа, мул тĕрек куллипе
Хастарлăхăра пўлсе лартрăр.
Тăшман савăнса, ерехпе аташса,
Пулас кун-çулне асне кўђĕ;
Татах сăнђăрне вăл кĕскен хытарса
Саккунĕсем умне хўме хуђĕ.
Тĕрмесем тавралли çиђшер хут хўми те
Вĕсен ирсĕрне пытараймĕ;
Есĕр, тантăшсем, тăкнă йун йĕрĕпе
Çамрăксем нихçан та утма манмĕç.
Ђăнлăх хĕвелне куç умне çывхартсан,
Мĕн пур хўмесем ишĕлейĕç;
Кун-çул йухăмне хамăр майлă йарсан
Сирĕн йатăрсем те ђеђекленĕç.

*Шупашкар, 1921 ç.*

## Çирки поп.

Çыран хĕррипеле,
Ђăнкă вырăнсемпеле
Хайар Çирки поп утаť.
*Хушматъ*: Çирки поп! Çирки поп!
Çирки тйакăнпа ђеђук,
Пăнамарĕ – Çирки ывăљ,
Ђанне те Çирки çапаť,
Йал пуçне те хăйнех шутлаť.
Анђах йалти комсомолĕссем
Ун пек те, кун пек калаçаť:
Ай-хай, тантăшăмсем,
Ай- хай, комсомолĕссем,
Тĕрĕс! Тĕрĕс! çак сăмах.

Кĕлĕ çурђĕсенђе
Хăйсен тумĕсемпе
Комсомолĕссем пухăннă;
Çирки поп çилленнĕ:
Турă, тет, тўсеймĕ,
Мăкăр-мăкăр! мăкăр-мăкăр калаçаť.
Акă комсомолĕссем
Карталанса тăђĕçĕ
Вăл выљђама, савăнма.
Ах, Иссус! Иссус, тет поп.
Пайан унăн кăмăл çук:
Тăрсти! тăрсти! тапса йатлаçаť.
Хăйаматах кайђђĕр-ха
Пур çветуй те, пупĕ те—
Сурхури вăл пирĕн уйав.

# Пионер йуррисем.

## Малалла пăхатпăр.

Малалла пăхатпăр,
Куратпăр çакна:
Тахшинсем пыраççĕ
Уççăн йурласа.
(*Хушса йурламалли*).
Йан-йанах кайтăр
Пионер йурри,
Тĕнђипех çутаттăр
Советăн çутти. } *2 хут.*

Те Çĕнкассем ĕнтĕ,
Те хулари отрет?—
Килет кунталла
Ав тусан вĕçтерсе.

Йан-йанах кайтăр...

Тăрăс та тăрăс! пусса,
Харăссăн, йĕркеллĕн,
Йап-йака çулпала
Пирĕн отрет пырать.

Йан-йанах кайтăр...

Хăйуллăн утатпăр—
Куç-пуçсем вутла,
Паттăрăн сывлатпăр
Виççĕмĕш отрет.

Йан-йанах кайтăр...

Сыв пулђђăр Советсем,
Сывлăх—пионерсене;
Вĕсен комсомолшăн
Çунаççĕ ђĕрисем.
Йан-йанах кайтăр...
Ай-хай, тантăшăмсем,
Ку йурра вĕçлерĕмĕр;
Хаљ хĕрлĕ йалава—
„Кип! Кип-кип! Урра!“
Йан-йанах кайтăр...

*Мускав, 1924 çул.*

## Вĕлкĕштерĕр йалава.

(*Вырăсларан*).

Вĕлкĕштерĕпĕр йалавне;
Çĕклĕр, тытăр çўлерех!
Пурте илђђĕр, пурте пĕлђђĕр
«Хатĕр пулăр» тенине.

Епĕр виђкĕн ђĕннĕ сасă
Йан-йан! кайĕ тĕнђипех;
Пире илтĕ пĕтĕм халăх
Пире пĕлĕç пур çĕрте.

Пур çĕртен те ак хастарăн
Çамрăк ђĕр вăй сасă парĕ;
«Хатĕр-и?» тейĕр—пурте харăс:
«Йалан хатĕр!» тесе калĕç.

*Мускав, 1924 ç.*

## Тӑрна.

*(Вырӑсларан куҫарнӑ)*

Пухӑнсамӑр, тантӑшсем,
Тӑрна ҫинҫен йурлӑпӑр.
　Тӑрна, тӑрна, тӑрна мӑй
　Тӑрна мӑйӗ—кукӑр мӑй } *2 хут.*

Ӗлӗк мӗн еп?—йаланах
Урам тӑрӑх ҫупаттӑм.

Ӗлӗк ӗҫшӗн еп ҫунман,—
Маншӑн ытти лӑш курман.

Акӑ хаҫ ман ҫӗн ӗҫ пур,
Шӑл ҫумалли йӗрке пур.

Пирӗн тирпейлӗ пулмалла,
Ҫӗр шывран сыхланмалла

Еп отрета ҫырӑнтӑм,
Калама ҫук савӑнтӑм.

Тӑрсти! тӑрсти! кам пусаҫ?
Пирӗн ҫиҫҫӗмӗш отрет.

Таҫӑ лакӗрте пурнаҫ,
Пулемет пек йумахлаҫ.

Ваҫукӗ те куҫҫанмасҫ,
Вӑл сӑвӑсем хаҫ ҫыраҫ.

Комунӑна ӗненетӗп—
Комсомол вӑл—пирӗн пиҫҫе.

*Мускав, 1924 ҫул.*

## Пионерсен клупнелле...

*(Демьян Бедный сăвви „Проводы“ кĕввипе).*

Пионерсен клупнелле кайма тухрăм,
Кинемейсем пĕлнĕ те, йарса тытрĕç:
—Ан кай унта, ан кай ес, савнă ывлăм,
Пионерсен клупĕнђе—усал сывлăш.
Епĕр пурте вăл клупа йуратмастпăр,
Çавăнпа унта сана пађ! йамастпăр.

Унти халăх пит шавлаť, алхасаť, тет;
Унта мĕн пур усала вĕрентеç, тет.
Сире унта усалсем астараççĕ—
Тўрĕ, ырă пĕр турра мантараççĕ.

Ес ђиркĕве кайсассăн, аванрахђĕ—
Турра ўксе пуççапса кĕл тăваттăн.
Турăран—ўсме сывлăх ыйтмаллађђĕ,
Вара лăпкă, йĕркеллĕ çын пулаттăн...

Кинемейсен сăмахне еп итлерĕм—
Пăртак тăтăм, тăтăм та: Итлĕр, терĕм,
Пионерсен хĕрлĕ клупĕ—пирĕн ĕç вăл
Пурте уншăн пĕр пулса, кар-р тăратпăр.

Турăпа райсем çинђен ан та калăр,
Çĕр çинђех те хамăрах рай тăватпăр.
Телейпе ыр пурнăçа турă параймĕ—
Ăна пурне ĕç тăвĕ—ĕç вăйхалĕ;

Епĕр хамăр клупсенђе вĕренетпĕр—
Çĕр çинђех çын пурнăçне çĕнететпĕр.

*Мускав, 1925 ç.*

## Линка-линка авкаланма.

Линка-линка авкаланма } 2 хут
  Йуман хăма кирлĕ; }
Хаљ те йуман, тата йуман
  Тата йуман кирлĕ.
Кулаксене тĕп тума
  Пĕрле тăма кирлĕ,
Хаљ те пĕрле, тата пĕрле
  Татах пĕрле кирлĕ.
Хамăр умра вĕлкĕштерме
  Хĕрлĕ йалав кирлĕ,
Хаљ те хĕрлĕ йалавсем пур,
  Тата йалав кирлĕ.
Çĕн йĕркене вĕренме
  Çĕнĕ шкулсем кирлĕ,
Хаљ те çĕнĕ, тата çĕнĕ
  Çĕн шкул уçма кирлĕ.
Совет влаçне сыхлама
  Матур салтак кирлĕ,
Хаљ те матур, тата матур,
  Тата матур кирлĕ.
Пирĕн ĕретри çамрăксем
  Йалан матур пулĕç,
Хаљ те матур, тата матур,
  Тата матур пулĕç.
Пирĕнпеле пĕр пулма
  Кăварлă ђун кирлĕ;
Епĕр хĕрӳ, тата хĕрӳ,
  Татах хĕрӳ кирлĕ. *Шупашкар, 1924 ç.*

**Хастарлăх.**

## Ҫӗнӗ ҫул ҫинҫе.

(*„Касрӑм, касрӑм пӗрене" кӗввипе*).

Сакӑр ҫула ҫитрӗм те, ҫитрӗм те,
Тухрӑм утрӑм шкулалла.
Пионера ҫырӑнтӑм, ҫырӑнтӑм—
Тӳрех ҫӗр вӑй хутшӑнҫӗ.
Пурте харӑс тӑтӑмӑр, тӑтӑмӑр—
Ӗретленсе утрӑмӑр.
Умри йулташ аллинҫе, аллинҫе,
Хӗрлӗ йалав йалкӑшаҭ.
Йалав ҫине пӑхрӑм та, пӑхрӑм та,
Умри кун-ҫул палӑраҭ.
Татах ҫӗр вӑй пухрӑм та, пухрӑм та,
Хастар утрӑм малалла.

## Пӗҫӗк ҫеҫ пионер.

(*„Пӗҫӗк ҫеҫ путене" кӗввипе*)

Пӗҫӗк ҫеҫ пионер
Ҫӗн йӗркене йуратаҭ;
Йуратаҭ, йуратаҭ,
Ҫӗн ҫул ҫине хӑй тухаҭ.
Аҭӑр, аҫсем, епӗр те,
Ҫирӗп тӗвве пухӑнар,
Пухӑнар, пухӑнар,
Пионера ҫырӑнар.

Ҫав Малти-кас аҫисем
Пионера*) йуратаҫ;
Йуратаҫ, йуратаҫ,
Йалан пӗрле пухӑнаҫ.
Пӗҫӗк ҫеҫ пионер—
Ҫӗн йӗркене йуратаҭ;
Йуратаҭ, йуратаҭ—
Ҫӗн ҫул ҫине хӑй тухаҭ.

*Шупашкар 1924 ҫ.*

*) Клупра пулма — теме те йураҭ.

## Тинех пире улталас çук.

*(Пионерсен выђђанă тъух каламалли).*

Патша, улпут
Тин пулас çук,
Пуп таврашĕ
Пуç пулас çук,

Ђиркӳ ђанĕ те
Улталас çук;
Пин турă та
Хăратас çук.

Çĕн çут хĕвел
Пăхса килет,
Тĕнђе питне
Ăшши витет.

Йăлтăртатсах
Çĕн вăй ӳсет
Кивви пађах
Хăрса ӳкет.

Кивви вилет,—
Çĕнни ӳсет;
Кун-çул тумне
Çĕн тĕр тĕрлет.

Ав вăл тĕрĕ
Йалав çинђе;
Кам вулас, тет
—Ун çине пăх.

Кам пĕлменне
Ђерет çитет:
Вађук! ђерет—
Сик, тух!..

*Шупашкар, 1924 ç.*

# СĂВĂСЕМ.

## Çěнě йурă.

„—Çěклен! çěклен, хастарлăх!
Сис, вăран ес, çамрăк ђун!
Çěнел! Хускан, патварлăх!
Çитрě саншăн хěрÿ кун!“

Епěр халě — çиçěм,
Вутлă çавраçил;
Пирěн халђи кěввěмěр
Хайар аслати...

Çěнелнě вăй - халě
Ÿссе ђăмăртанђě:
— Пěрлешěр!.. Пěр харăс
Çěн йурă йурлатпăр.

Пирěн çěнě йуррăмăр
Хавас йанăраť вăл;
Унпа вěрет ђунçăмăр,
Унта—çилтăвăл.

Вутлă тăвăлпа
Сассем шăранаť.
Мĕн пур таврана
Вут-хĕм ывтăнаť.

Хĕвел тухăçне
Унăн анăçĕ,
Кăнтăрĕ—çурçĕрĕ
Саламларĕçĕ.

Мĕн пур ĕç ђĕрийĕ
Вĕретет ку сасса,
Мĕн пур ĕççыннийĕ
Йурлаť ку йурра.

Тĕнђе ђуниллийĕ
Ђĕтрет унпала.
Нумай вăхăт иртмĕ -
Таптатпăр ăна!

Епĕр халĕ—çиçĕм,
Вутлă çаврăçил;
Пирĕн халђхи кĕввĕмĕр
Хайар аслати...

— Вăранăр! пĕрлешĕр,
Асап курнисем!
Тĕнђипех кисренђђĕр
Вут-хĕм кĕввисем.

*Шупашкар, 1921 ç.*

## Çамрăкăн шухăшĕ.

Нумайах капла
Пӳртре çыхăнса,
Кантăкран пăхса
Ман ларас-и-ха?

Ахалех халех,
Çамрăк ĕмĕре
Иртерсе йарса,
Ватăлас-им ха?

Халăх умĕнђи
Ђаплă ĕçсене
Килессе кĕтни—
Вара аван-и?

Ђĕрем сикнĕ ђух,
Тĕнђе çуннă ђух,
Вăрмана тарма
Намăс та мар-и?

Карђăкла килте,
Çамрăк пуçпала
Кĕлленсе выртма
Ир пек мар-и-ха?

Пăшала-хĕçе
Таса алăпа
Киленсе тытма
Вăхăт та мар-и?

Халăха ирĕк
Парас йĕркене—
Канаш тĕрекне
Мĕншĕн сыхлас мар.

-Кĕпе-йĕм ђĕрĕк,
Анђах ђун çирĕп—
Мĕншĕн ыр ĕçе
Сиксе тухас мар.

Авă, ав лере,
Хĕрлĕ йалавпа
Йулташсем килеç
Йурă йурласа.

Çамрăк ђунсене
Хăйсен ырăнне
Тухĕçха, тесе
Шанса тăраççĕ.

Пурăнăç çулне
Йусас шутпала,
Вăйне хăватне
Ĕçе хураççĕ.

Йалав вăркăшса
Пире йыхăрать;
Кĕтсе çеç ларма
Ђунăм ђăтаймасть.

Йалава кура
Ђунăм ман çунать;
Ђĕр вăйа пухса
Йунăм выљђанать.

Йулташсем патне
Тухса вĕçетĕп;
Вĕсен йалавне
Алла илетĕп.

—Йал-йышăм сыв, пул!
Манран таса йул.
Ĕмĕрхи ĕмĕте
Сыхлах ђĕрӳнте.

Курăнсах тăрать:
—Епĕр çĕнмеллех.
Ĕç алли ђăтать—
Тĕнђе çĕнелет.

*1921-ç. Вăрнар.*

# РÇЛКС сасси.

Тĕксĕмлетĕн айлăма,
Тĕтре, сирĕл айлăмран!
Илемлетрĕм сассăма
Кĕвĕлентĕр вăл пайан.

Еп тĕтрене ылханап,
Мĕн пур ултав унта, теп.
Мăшкăл çине кăтартап
Ђасрах çӳле, сăрта! теп.

Умри тĕнђе мĕнлине,
Пурнăç тенин илемне,
Çав тĕтре çеç çӳресе,
Айлăм, сана пĕлтермест.

Тĕтрепелех путланма
Ес тĕнђене çуралман;
Хăй ăшшине—ырлăха
Хĕвел санран пытарман.

Ĕмĕр ӳснĕ ĕмĕтне—
Вĕриленен ĕçпеле
Тĕтре тумне тыт та, çур!
Хĕвел тумне манпа кур.

Епĕ кунтан, сăрт çинђен,
Пăхса илтĕм тĕнђене,
Тинĕс урлă леш йенђен
Васкаĭ кунта çуркунне.

Унпа пĕрле ђеђексем
Ђĕнтĕрленĕ тумсемпе,
Çӳлте тăрри-ђĕкеçсем
Тĕрлĕ йурă-кĕвĕпе.

Пурте васкаç кунталла,
Пурте, пурте пирĕн пата.
Пирĕн кĕтсех тăмалла,
Кĕтме хирĕç тухмалла.

Етем ђунне сыватма—
Унта мĕн пур илем пур.
—Килĕр сăрта, ман патма!
Кам хастарлă,—кил те кур!.

*Шупашкар, 1922 çул.*

## Çамрăксен уйавĕнђе.

Илемлĕн, ђеђенĕн
 Тĕнђе йешерет;
Хир-уншăн, ђĕр ђуншăн
 Вăл ырлăх кўрет.

Тирпейлĕх ђеђекĕ
 Кунта пуç тайаť;
Мĕн пур пек ђĕр ђунĕ
 Савса сас параť.

Кăвак пĕлĕт—уйарла́х
 Çĕре туртăнаť;
Куç айĕн йăвашшăн
 Хĕвелĕ пăхаť.

Мăнтарăн!.. Çанталăк
 Çунаť, йалкăшаť:
—Уçсам ĕнтĕ, уç алăк!
 Унта ђун туртаť.

Такамшăн та хаклă
 Çак çутă самант;
Маӈ ђунçăм та хусканнă,—
 Унтахваскатаť.

Етемлĕх кун-çулĕ те
 Пĕр май улшăнаť;
Ĕçђенĕн куççулĕ те
 Типсе пуçтарнаť.

Хаљ халăхшăн хаклă
 Кунсем куç умнђе;
Ун майлă хăватлăн
 Йанраť çут тĕнђе.

Ĕç мулĕ - тăшманĕ
 Ĕмейнĕ йунсем,

Ҫав мулӑн асавӗ
Йӳнђетнӗ ђунсем
Шатах ав хастаррӑн
Пӗрле пуҫтарнаҭ;
Патварӑн, хӑватлӑн
Ӗҫе пуҫӑрнаҭ.

*
* *

Илемлӗн, ђеђеклӗ
Тӗнђе йешерет;
Тирпейлӗ ҫи-пуҫлӑ
Ђеђекӗ ӳсет.
Хӗрӳ ӗҫ хӗретнӗ
Йалав ҫӗкленет;
Пит тимлӗн, ӗретлӗн
Ҫак вӑй кӗрешет.
Ӗҫӗн хӗҫӗ—ҫиҫӗм
Ҫиҫсе ҫех тӑраҭ:
—Мул пусмӑрӗ, сирӗл!
Ҫапаҭ, ҫунтараҭ.
Ђӗнет вӑлӑ вирлӗн
Мӗн пур ҫамрӑка:
—Йусатпӑр, тӑртатпӑр,
Йалав пирӗн алӑра!
Пур ҫамрӑк, хастарӑн
Ҫӗклен ђунӑпа!
Пурӗ пӗр пулатпӑр
Вӑрҫма—тапӑҫма.
Мулӑн тӗнђи вантӑр,
Йӑлт ҫухалтӑр—
Ђӑнлӑхпала ырлӑх
Кунҫул патӑр!..

*Май 1-мӗшӗ, 1923 ҫул.*

## Хĕраҕасене.

Шухăшлăрха, хĕраҕасем,
Мĕншĕн çукха пирĕн сассем?
Мĕншĕн епĕр ҕĕнместпĕр,
Пуçа усса çӳретпĕр?

Ĕлĕк ӳпкелеттĕмĕр,
Хисеплемеç, теттĕмĕр,
Пирĕн те ҕун пур, теттĕмĕр,
Пĕр тан пулас, теттĕмĕр.

Акă çитрĕ ыр вăхăт,
Йĕрнĕ сасса вăл илтрĕ;
Пурне пĕр тан хисеплет
Пурне вĕренме вăл ҕĕнет...

Халĕ çула пӳлмеççĕ,
Пире ҕунтан ҕĕнеççĕ;
Епĕр çавах сисместпĕр,
Тĕттĕмлĕхрех çӳретпĕр.

Вăхăт марши văранма
Пуçпа хыттăн шутлама:
Çамрăксемпе пĕрлешме—
Алла—алăн ĕçлеме.

Аттăр, васкăр, пĕрлешер,
Ăслăлăха вĕренер;
Çамрăксемпе пĕр пулар,
Çаплах кайра йулар мар.

*Хусан, 1920 çул.*

## Тӑрӑшакан йулташа.

*(Сурӗккӑв çырни тӑрӑх).*

Ӗçпе пиçнӗ йулташӑм,
Сана тархаслатӑп еп;
Пӗрре ӗçе тытӑнтӑн
Тӑрӑш, пӗтер ӑна, теп.

Çул варринҗе, ӳркенсе,
Ӗçе нихçан ан пӑрах:
Хӑвӑн ӑшӑнти хӗлхемне
Сӳнсе ларма ан парах.

Санӑн җуну, хӗрнӗскер,
Ыйха кайса ан тӑтӑр,
Çулу, йунпа тупнӑскер—
Сан умӑнтан ан йултӑр.

Темле тискер шутпала,
Пулассинҗен хӑраса,
Çӗн çулупа кайасса
Ан ман, утах малалла!

Çӗн пурӑнӑç çулӗ çине
Мӗншӗн тухни çийӗнҗен
Ан ман, асту пур çӗрте.
Мӗншӗнне ес ху пӗлен.

Пуçӑмӑрсем çийӗнҗе
Йанратӑр-и аслатте,
Епӗр тарпа, ӗçпеле
Çӗнтермеллех тӗнҗене...

*Вӑрнар, 19[illegible] çул.*

## Вĕренекенсене.

*(тђĕнў)*

Ăслăлăх çулĕ çине
Сиксе тухнисем,
Кунçул йухăмне
Алла илнисем,
Пурте хастарăн
Вĕренсе пырăр,
Пур çĕре хăватлăн
Вĕçтерсе тухăр.
Сирĕн сассăрсем
Çиçĕмле çиçђĕр;
Ĕмĕт—анлăшсем
Тĕнђене виçђĕр,
Măшкăлри ĕçђен
Сикейсе тăтăр;
Кун çулĕ çинђен
Тĕпђеме тухтăр.

Ĕçĕн тивлетне
Илтĕр вăл хăйне;
Илем ђеђекне
Пĕлтĕр ўстерме.
Пурнăç анинђе
Çав ђеђек ўсĕ;
Кунçул аврине
Куç умне кўрĕ.
Мĕн пур пек тĕнђе
Ĕçпе çĕнелĕ;
Хĕвел ăшшинђе
Хăйне тирпейлĕ;
Çав хĕвел ăшши
Шкултан саланаť;
Ан ман, шул ађи,—
Вăл санра пулаť.

*1923-ç. Шупашкар.*

## Вĕрентекенсене.

Çĕн хĕвеле шыракан—
Ăслăлăха ырлакан,
Мĕншĕн йалан выртатăн?
Мĕншĕн ыйăха кайатăн?

Ĕçхалăхне аса ил,
Револђутси—çавра çил—
Унăн ђунне турткаларĕ,
Çапăçса вăл лăш курмарĕ.

Халран кайрĕ—ывăнҫĕ—
Сан йенелле ал тăсрĕ...
Мĕншĕнши ес курмастăн?
Мĕншĕн ална памастăн?

Сана шкула, вĕренме,
Халăх вăйĕ тупса паҫĕ,
Уншăн пуҫри шухăшне
Мана парĕ, тесе шанҫĕ.

Ирсĕрлĕхпе тĕттĕмре,
Вутпа кăвар ăшĕнҫе
Сана халĕ вăл шырат,
Ҫунтан вартан йăлăнат.

Анҫах есĕ курмастăн,
Ăна сăмах хушмастăн
Ҫасрах вăран, ан ҫывăр!
Еҫ халăхне пит йывăр.

Хăвăн ăшă сăмахна
Вĕрентӳҫ, ес ан хĕрхен.
Хытса ҫуннă халăхна
Унпа есĕ нӳретен.

Тусăм, вăран, ху куран
Ҫĕн хĕвеле ес шыран
Мĕншĕн тата тухмастăн,
Мĕншĕн уншăн тăмастăн?

Ăсу-тăну хăвăнта,
Вăйлă хаҫ ес унпала.
Тухса калаҫ, ăнлантар.
Хашкат, — йăпат, лăплантар.

*1920-ç. Хусан.*

## Çамрăксен сасси

Çӳрĕр, ĕçлĕр, йулташсем,
Пĕтĕм ђунтан тăрăшăр,
Сирĕн хыççăн, çамрăксем—
Епĕр хастар пырăпăр.

Пĕрне пĕри улăштарса,
Вăй çитнипе тăрăшса,
Пырар йурра йанратса,
Хĕвел çине кăтартса.

Вăйлă, хытă алсемпе
Пуршуйсене пăђăртар;
Коммунисăм йалавне
Çӳле йăтса кăтартар.

Ĕçхалăхне çăлакан
Ирĕклĕхри пурăнăç—
Пире ирĕк паракан
Çитрĕ ĕнтĕ савăнăç.

Раççей улпуђ-йытăсен
Татăккисем çеç йулђĕç,
Çавсене те пирĕн ĕнтĕ
Пĕтерессии çеç йулђĕ.

Хăшне вилĕм пулин те,
Ĕçлĕр, васкăр, тăвансем,
Епĕр есĕр тупнине
Çухатас çук, çамрăксем.

Çухатма мар, вăйлатма
Тăрăщăпăр малашне,
Ђурăлăхăн сăнђăрне
Ĕмĕрлĕхе салатма.

*Хусан 1920-ç.*

## Епӗ ҫӗнелтӗм.

Ӗҫхалӑх хӗвелӗ йӑлкӑшса тухса,
Мӗн пур таврана ҫӗнетнӗ ҵухне
Епӗ ҫӗклентӗм.
Ҫамрӑк ҵӗреме ҫӗнӗ вут-хӗмпе
Хӗртсе тасатса, хӗрӳллӗ ӗҫе
Епӗ пикентӗм.
Ҫӗре, ҫӗр тӗпне, тӗнҵе тӳпине,
Мӗн пур пур-ҫука—ҫивҵӗ куҫӑмпа
Виҫсе илейрӗм.
Ӗмӗрхи ултав куҫ умне тухрӗ,
Ҵӑнлӑх ырлӑхпе тамӑка путрӗ—
Тӗплӗн ӗнентӗм.
Тӗнпе мар, темӗнпе таҫта туртсан та,
Тинех киввине пуҫ тайса тӑмӑп.
—Ӗнтӗ ҫӗнелтӗм.

*Шупаткар, 1923-ҫ.*

## Хаљхи шухӑш.

Ӗлӗк питӗ хӑранӑ
Киреметрен, турӑран;
Йалан ӑна пуҫҫапнӑ,
Ҫырлахтарнӑ тытасран.

Ӑҫта-ши халӗ, тӗлӗнеп,
Тӗрлӗ турӑ—киремет?
Ман ҫавӑрса тытасҵӗ—
Тӗсне-пуҫне курасҵӗ.

*Елӗк, 1919 ҫул.*

## Епĕр—октăпĕр ђеђекĕ.

*(ПСÇКС тымарĕ)*

Емĕрхи пусмăра,
Тӳсме çук мăшкăла
Ĕç сунталĕ çине
Хурса ватнă ђух,

Çиçĕмех çиçтерсе,
Тĕнђипех кисретсе,
Аслати çапса
Кĕмсĕртетнĕ ђух,

Октăпĕр хĕвелĕ ђарласа тухрĕ—
Ĕсхалăх куçне йаррийех уçрĕ.
Хĕрӳрен хĕрӳллĕн,
Виђкĕнрен виђкĕнĕн

Çĕн йурра йанратса
Вăл çула тухрĕ,
Ĕмĕрхи йунпала
Йалава сăрласа,

Тĕнђе куç умне
Çĕклесе тытрĕ.
Татах та хастар малалла кайрĕ,
Çĕр лĕпки çине йалава лартрĕ.

Тăвăл вăйĕ —кулă мар,
Йалавран йунлă тар
Утнăçем сăрхăнса
Тумласа пыђĕ,

Кĕрешӳ хисепне
Çĕн хĕвел ăшшинђе
Йалав вĕлкĕшни
Шутласа хуђĕ.

Тумланă тĕле вăрлăх акăнђĕ,
Çĕнĕ ђĕп ђĕрĕ хунав кăларђĕ.

*Шупашкар, 1923 çул.*

## Епĕр.

Мухтансан та çылăх мар:
Пылђăкпала тусланнă;
Ђăнах, халĕ те çӳлтех мар,
Ишнĕ ĕнтĕ, хупланнă.

Анђах епĕр хамăра
Хаљ виттĕрех куратпăр;
Йусас тесе тăрăшса
Сăмах çапса пыратпăр.

Пирĕн çамрăк ђĕрере
Çĕн вăй-хăват выљђанать;
Лапра çинђен çӳлелле
Çул пуррине куç курать.

Халĕ те епĕр пылђăклă,
Пытарас шут тытмастпăр,
Çĕтĕк-çатăк тăхăннă,
Таса, тесе тăмастпăр.

Кулђђăр, сурђђăр пирĕн çине,
Сиввĕн пăхђăр йут çĕрте.
Анђах сисĕç—ђĕрере
Пирĕн вут-хĕм пуррине.

Хастарлăх.

## Çамрăксем, хаљ ĕçе тухар!

Çамрăксем, васкар—
Хаљ ĕçе тухар;
Вăйсене пухар—
Пурнăçа йусар.

Йунпа пиçнĕ ђух
Пĕрле пухăнар;
Тимĕр хĕрнĕ ђух
Хытăрах шаккар.

Киввин вырăнђе—
Çĕннин ырлăхĕ!
Ĕçхалăх тĕнђи
Йалав тыттăрĕ.

Пурнăçăн йĕрки
Ђасрах йусантăр;
Тăшманăн мĕлки
Пађах çухалтăр.

Мĕн пур кăмăлăм
Ĕç вăйĕ çĕкленет;
Хĕнхура ђуна
Йăлтах çĕнетет.

Епĕр тăрăшни
Нихçан çухалмĕ;
Еçпе пăђăхни
Пурне çутатĕ.

Улпутсен йĕрки
Çирĕп тымарлă;
Монархисм тĕкки
Тимĕр туналлă.

Тымар хускантăр,
—Хытăрах шаккар!
Ђасрах путлантăр,
Таптасах тăкар.

Çамрăксем, тăнлăр!
Нимрĕн ан хăрăр.
Пирĕн çĕн вăйа
Çĕнеймĕ никам!—

Çенĕрен çĕнĕ,
Çĕнĕ ĕççемпе
Çирĕплентĕрђђĕ
Пирĕн пуç мимми.

Ăсталăх, пĕлў...
Сыв пул, ĕç лаççи!
Çак лаç пирки çирĕп
Советăн хўми.

*Вăрнар, 1920 çул.*

## Вăхăт ишме—аркатма.

Тĕксĕмленсе, хĕрелсе,
Пĕлĕт шăваҫ тупере;
Ҫăлтăрсене сÿнтерсе
Хуплаҫ хураҫ тĕнҌене.

Ҫавăн пекех пирĕн урлă,
Выҫлăх, вăрҫă ҫул хураҫ:
Аса илме пит хурлăх—
Шавлаҫ, кашлаҫ, йанăраҫ.

Пире пурне хур туса,
Кил-ҫуртсене кĕл туса
Вут-хĕм тăкрĕ пур ҫĕре
Пуйан ҫĕнес ĕмĕтпе.

Савăнăҫлă пурнăҫа
Шăлса илҌĕҫ пирĕнтен;
Ҫарамаса хăварса—
СуранланҌĕ хĕресҌен.

Суранланнă пулин те,
Пирĕн Ҍĕре хамăрта.
Мулăн леш тĕп никĕсне
Вăхăт ишме—аркатма.

Пире тиврĕҫ—хур турĕҫ,
ХаҌ хăйсене ăшалар;
Пирĕн халĕ ҫул уҫрĕҫ,—
Аҫăр, Ҍасрах аркатар.

*Вăрнар, 1920 ҫул.*

## Ђĕкеçĕн çĕнĕ йурри.

Пĕђĕкçеççĕ питлĕ-куçлă,
Ереветлĕ, тѳветлĕ,
Хӳри вĕçне туй килнĕ—
Йакат Петĕр пăђăнтăр!..

**
*

Măн уссиллĕ, выçă куçлă,
Тир сĕвесшĕн—ђейескер,
Пирĕн çине вăл килнĕ—
Паљак панне пăђăртăр-р!..

**
*

Мĕн усси вăл? ĕмĕрнех
Килĕшĕве кансĕрлеç,
Мул хуçисен йыттийĕ—
Паљак панĕ пăђăхтăр-р!

**
*

Тискер ĕçе пĕтерсе,
Ырă вăхăт килмеллех,
Епĕр ăна кĕтетпĕр—
Ђасрах килтĕр—тăрăшăр-р!..

*Хусан, 1920 çул.*

# Пĕр пĕђђен ђухне*).

Çуçенђĕк ђунлă
Вăрманăн кĕтесси—

Ђухенсе йулнă
Вăрнарăн ђĕри,

Ман сассăм пурне
Манасшăн пулмарĕ,

Вăл мана йӳнев
Хавассăн йурларĕ.

Пурнăçри хĕн-хур
Куç умне капланђĕ;

Ђунăмри мĕн пур
Вăйăмçăм хусканђĕ...

Ытарма май çук
Илемлĕх ăшĕнђе

Йулташсем ман çук—
Вĕсем... пит инçе.

Вĕсем çук пирки,
Пĕђђен çех утатăп;

Вырнаçса пĕтми
Синкере туйатăп.

Манпала туслă
Ыр саслă вĕренекен,

Анаслу пуснă
Вăхăта сисейсен

„Йурлама!..“ тесе
Ђĕнсе илекенђђĕ,

„Путланман,“ тесе
Йĕрсе кĕвĕллетђĕ.

Халђ ак, вăл та çук,
Пĕр пĕђђен еп кунта.

Çӳреме... —хĕр çук—
Кураймăп та ăна.

Вăрман çех шавлаť—
Хăй пурне систерет;

Ђӳређем йанраť
Йăвашшăн йĕртерет.

*Вăрнар, 1922 ç.*

---

*) Ку сăвва выçлăх çулсем хыççăн, Вăрнарти шкулта вĕренекенсем пурте килĕсене салансассăн, çырнă. Шкулта никам çук. Пĕрлешсе ĕçлесе, шавласа пурăннă хыççăн, пĕр хаçат-кĕнекесĕр тăрса йулсассăн, такам та ун пек çырмалла.

## Хастарлă тĕнҍе.

*(Майакковски сăвви)*

Çĕрĕн ĕçĕ—çаврăнасси,
Тăкăнасси—шывсен ĕçĕ.
Самрăк ҍунсен хастар сасси:
Йалан васка, васка тесси.
Сĕрсе утни—кивелҍĕ вăл,
Хаҍ пурăнăç—виҍкĕн тăвăл.
Мĕлйун шутлă хастарлă вăй—
Йалав айне!.. васка, васка!..
Вăл çеç пит сахал-ха.
Ушкăн ушкăнпе кĕнеке-хут çине,
Пĕр харăс тăрса, пырса уртăнар,
Саспаллисене ĕмсе, ҍăмласа,
Шухăшсем акса, вырса илĕпĕр.
Хастарлă ҍĕр ҍун!
Васка! васка! ҍуп!..
Çĕнелнĕ вĕри йун,
Пуçна хаҍ вут хут!..
Анҍах ку сахал-ха
Çулĕрен çӳлĕ, ҍи çӳлĕ çĕре,
Тăнхăртат,—çитсе çапăн!
Унти çĕн сунтал,
Хурçă шалтăрмаллă
Кăмăл çунатти
Кăкăру тулли
Çĕн вăй, çĕн хăват
Туптатса ларттăр!

Есĕ тĕнђене, пĕтĕм çĕр-шыва,
Ђăпта тĕртнĕ пĕк, тĕртсе купала.
Тĕнђе ђĕр çинђи
Мĕн пур йăх-йаха –
Мĕн пур лĕкĕллĕ
Пыйтă-шăркана
Çапса лапђăтса,
Тĕп туса хурар.
Тĕнђе хысакне—
Пур пек вăй-халне
Сулахай *) йенђе,
Тăракан тăвар.

*Мускав, 1924 ç.*

*)—Сулахай йен—левый блок.

## Ахах*) йулташа асăнса.

Есĕ утрăн, есĕ ђупрăн—
Ђуну шыраĭ вăйхăват.
Çитрĕн, куртăн—çимĕк турăн..
Йуну çунаĭ, кускалаĭ.
Йунлă вăрçă, халăх ырнă...
Йалав айне ес тăтăн;
Сывлăш уçă, шухăш ырă—
Ђăваш йатне тĕл пултăн.
—Ей, хусканăр,.. йăшаланăр!
Ђунтан-вартан сас патăн.
—Çул йусантăр, ђун лăплантăр
Йалав айне йыхăртăн.

*) Ахах (И. Е. Унтритсов) вилнĕ поет.

Măшкăл тўснĕ, шăннă, пўхнĕ.
Тăвăпах, тесе тăрăшрăн;
Сивĕ, выçă, ђирĕ йышлă...
—Çапла пуçна çухатрăн.
Нўр çĕр витĕр йăлăнатпăр,
Итле, тăнла пирĕн сасса:
Тав тăватпăр, асăнатпăр
Сăвăç, сана кăмăлпа.
Аталанђĕ,—вăйлăланĕ
Ђăваш сăвви малашне.
Сасă кайĕ,—ђаплăланĕ,
Йату саплĕ хăй хакне.
Сăвă çыртăн, ырă сунтăн
Тăван ђăваш ђĕлхине.
Акă уншăн, Ахах тусăм,—
Итле тавах тенине.
Ыйху йывăр, лăпкă çывăр—
Сассу кунта йанăрать;
Вăл—ђăвашăн, вăл йăвашшăн
Йалав айне йыхăрать.

*1921-ç. Вăрнар.*

# ЛЕНИНА АСӐНСА

## Кӑрлаҫӑн 27-мӗшӗ.

„От горящей домны революций
Отошел Великий Кочегар."
**А. Жаров.**

*
* *

Нимӗнле ҫил-тӑвӑл,
Нимӗнле ҫавра ҫил
Кун пек тӗнҫене хыттӑн,
Хыттӑн ҫавӑрттараймӗ;
Ҫиҫ-сакӑр сиктерӗш,
Ҫӗрсем ҫӗтрени—
Нимле шыв сикки те
Кун пек йанӑраймӗ.

— Вилҫӗ, терӗҫ, Ленин,
Ленин пирӗнпе мар!
Вут-хӗмӗн те, ҫиҫӗмӗн
Сарӑлҫӗ хыпар.
Пысӑк та-ҫке хуйхӑ,
Хуйхӑллӑ хыпар...
Ҫӗремӗрсем — вут-хӗм,
Шухӑш — шӗл кӑвар.

Те тăтăлђĕ тевĕрш,—
Те уккĕрĕ лащи?
Шартах! туса хуçăлђĕ
Самана кашти.
Тўннĕ пек те туйăнђĕ
Пурнăç урапи.
Вăл шăр-тах! туса сикрĕ.—
Сиксе хăлтартатрĕ.

Вилђĕ, теççĕ Ленин,
Ленин пирĕнпе мар!
Пин çĕрлĕ вĕçейрĕ
Ратио-хыпар.
Те ĕнтĕ йĕрес хаљ,
Те тăкас куççуљ?
Каскалаť, хĕсет ман
Ђĕреме вут ђуљ.

Çук!
Тевĕршĕ татăлман,
Шертешнĕк те çĕнĕ,
Мĕн пур тавраш çирĕп
Çĕнетнĕ урапан.
Çук!
Ўкес çук пирĕн лаши,
Ўксессĕн те вилмĕ;
Вăлă халĕ—ăс,
Ăспа тунă пăс—
Електритсăллă
Тилĕ.

Кăмăл—сывлăша, тетĕр—
Хатĕр йараплан,
Шыв çинђе—карапĕ,
Çĕрте—паравос.
Ĕçхалăхĕ хăтăлђĕ—
Тухрĕ тамăкран,
Çĕн çĕре çул тытрĕ
Çĕнĕ паравос.

Анђах...
Пайан хуйхă,
Хуйхăллă хыпар:,
Паттăр рулевой çук—
Ленин пирĕнпе мар,
Ĕмĕрлĕх куç хупрĕ
Аслă кăђекар!
Тăкăнат куççулĕ—
Ђарма çăмăл мар.

—Вилђĕçке-ха Ленин,
Ленин пирĕнпе мар!
Сӳнсе ларђĕ кени,*)
Сӳнђĕ шĕл кăвар.
Пĕр сӳннĕ ђĕре вăл
Текех тапас çук;
Пиншерĕн вĕрсе те
Ăна ђĕртес çук.

---

*) Питĕ ăслă, ђи пултаракан пĕр пĕр ĕç тăрăх калама çук тĕплĕ пĕлекен çынна кени теççĕ.

Çапах та çухалмĕ,
Ленинсăр та, çул;
Рулевойсăр лартмĕ—
Ленин лартнă шкул.
Пиншер пинĕн тухрĕççĕ,
Руђçă... кăђекарĕ.
Комун йенне вĕççĕрĕ
Пурнăç паравосĕ.

* * *

**Ленин вилђĕ,—анђах вăл çук мар.**

Мĕн пур пек тĕнђе ђĕтренсе тăрат:
—Вилђе вăл, вилђĕ—вăл çук хаљ, тесе
Сăмахне çапат.
Нумайĕш куççулпе, вĕри куççулпе
Хĕрлĕ йалава нўретсе, йĕрсе,
Ђунне çунтарат.
Тепри инçетре, таçта йут çĕртре,
Çўлĕ хўмере тăрст! та тăрст! сиксе,
Савăнса çўрет:
— Ђăн, ђăн.., вăл вилнĕ... аха, пуçлăхсăр!.
Тинех тин ĕнтĕ пирте вăй, тесе
Шатах çĕмĕрлет.
Хăйсен урамне çитес уйавне,
Кăђăк туртнăннах, туртса ĕрлешсĕ,
Раççейе пăхат:
—Тинехи? лекрĕре? А-а... йĕретре!?
Пуçлăхсăр ђухне çитсе пусатпăр,
Тесе çуйăхат.

* * *

Раççейĕ, ђăнах, куççуђ йухтарать,
Хăйĕн пуçлăхне тупăка хурать—
Вилнĕ вăл—вилнех.
Хĕрлĕллĕ хура йалавсем çĕкленсе тухрĕç,
Çĕн тупăк умне пырса усăнђĕç—
Ĕсĕклеççĕ вĕсем.
Хапрăк-савăтсем, таврана çурса,
Пурте харăссăн хўхлесе йађĕç—
Шелеççĕ пуçлăхне.
Тупăсем, пăшал... тĕрлĕ сас йанраса илет,
Çан-çурăм, вăй-хал вĕрет, çўçенет.
Йăвăр, ђăтма çук йăвăр—
Ђун-ђĕре çунать,
Тăвăр...

* * *

Анђах йалавсем каллех çĕкленђĕç,
Хапрăк-савăтсем каллех ĕç тытрĕç:
—Çук, ђарăнас çук, терĕç.
—Çук вилмен вăл, вилмест вăлă Ленин!
Хĕрў сасăсем йанраса кайрĕç,
Пуçлăх пирĕн çук мар, терĕç.
Ленин вăй-халĕ, çивђĕ сăмаххи
Пирĕн ђĕрене, ĕç халăх йунĕ ăшне
Кĕрсе вырнаçрĕ.
Кунçул тĕррине хĕртсе шăратма,
Пурнăç лаççинђе çĕн кăвать хума,
Çĕнĕ вут-хĕм пур.

Тинех—тин ĕнтĕ ан сик, мул хуçи!
Уйав мар хăт темĕн ту,—пăйав çех сан шăпу.
Ункăлах мăйна.
Вилнĕ Ленинах пире çул тытăт.
Кимĕçĕ—пирĕн тĕрек, пĕрлешў.
—Епĕр тăлăх мар.
Епĕр—хамăр вăй, епĕр—çулăм... Сывă пул, кĕрешў!
Пирĕн ђĕрçинђе Ленин сунталĕ
Пурнăç шăратăт.

*Шупашкар, 1924 çул.*

## Ленинăн йуратнă йурри.

(«Замучен тяжелой неволей...»)

Ђуралăхăн сăнђăрĕ йывăр,
Ес вилтĕн унпа çапăçсах;
Ĕçхалăхăшĕн тивĕçлĕ тăтăн,
Пурнăçна та ес патăн ăнах.

Тăван çĕр-шыва ыр тăвасшăн
Ес пит нумайах пурнаймарăн,
Анђах ес пит çирĕп, пит паттăр,
Ђăн-ђăн пуранса кăтартрăн.

Пурăнăçăн хакĕ, илсмĕ ăçтине
Кăтартрăн пире ес ĕçўпе.
Санпа пĕр ĕçри шăлнусемех
Хуратпăр сана хаљ нўр çĕре.

Тăшман аллинђе йăванмарăн,
Сана тавралла хамăр халăх;
Тăванмар, куçна та хупайрăн
Хăна çывăх тăван алăрах.

Сана тупăка хунă ђух та,
Нўр çĕрпе витсе хăварнă ђух
Куђђанипе çеç ђун сурмарĕ—
Пат-пат! тумламарĕ куç-çуђ.

Епĕр çилленсе çеç çитрĕмĕр,
Тăшманпа вăрçма ђун туртат.
Саншăн тăшмана ним хĕрхенмесĕр
Тавăрмашкăн сăмах паратпăр.

Санăнпе пĕрехçке пирĕн çул:
Епĕр те тĕрмере çĕрмелле;
Ĕçхалăх ĕçĕшĕн сан пекех
Пуçăмăрсене те шеллес çук.

Тетен, сан пекех, ак пире те
Тупăка хурĕç çамрăклах;
Пулас хаклă, çутă тĕнђейĕн
Йăхравçи пулни те аванах.

Епĕр сан пекех ĕненетпĕр:
Асаплă хаđ утнă çулпала
Сиксе тухĕ çĕнĕ, хайар вăй,
Вăл пулĕ пиртен вăйлăрах!

1925

# Сйеса килтĕр—аса илĕр.

*(Пĕтĕм Раççейри ђăваш комсомоллĕссен 1-мĕш сйес-не вулăса панă сăвă).*

Хаклă ђунсем-хăнасем,
Сйеса килнĕ çамрăксем,
Пурте килĕр, çывхарăр
Пĕрне-пĕри ал парăр.
Ирĕк пур ђух вăхăта
Ахаљ сайа йарас мар,
Ђăваш тесе, вăтанса,
Вĕренмесĕр тăрас мар.
Тахçантанпа тăрăшса,
Вĕри йуна йухтарса,
Ырă çула тухрăмăр—
Çав çулпала утатпăр...
Çутă паха çуртсенђе
Нумайĕшĕ тĕнђере
Мăнтăрланса, ыр курса,
Пуçлăх пулса пурăннă.
Вĕсем çынна, ђĕр ђуна
Ик-виç пайа уййрнă,
„Шур шăмăпа хурийĕ“
Пĕрлешесрен хăранă.
Хăйсем валли шур шăмсем
Канăçлăха суйланă.
Вĕсен шампа хырăмсем
Халăх йунне сăрăхтарнă.
Йун купиллĕ пысăк çурђĕ
Вĕсен шурă аллинђе;
Аслă паллă шкулĕсем—
Вĕсен ађи умĕнђе.
—Хура халăх?-вырăссем
Вăталăххи вырăнђе.
Вак халăхпа сыснасем
Пĕр хисепре-хĕскĕђре...
Мĕскĕн ђăваш халăхне
Ун ђух пурте ылханнă,
Кăпиталăн тыткăçсем
Унăн çулне картланă.
Пуçри ăс-тăн, вĕри йун
Сахалланнă, тăпланнă;
Пурăнăçĕ кунтан кун
Тĕттĕмлĕхе паранна.
Аслăлăхăн ырлăхне
Ун умĕнђен пытарнă;
Ђăвашсене пур çĕрте
Такăнтарса уттарнă.
Нимрен ытла ђĕлхине
Тŷнтермешкĕн ђул тытнă,
Ђăваш йатне йерипен
Сŷнтермешкĕн тăрăшнă.
Тискер вĕлтрен ăшĕнђе
Çапах ђăваш çухалман,
Тăван амĕш ђелхине
Тем тусан та пăрахман.
Вăрттăн-вăрттăн çŷресе
Аслăлăха шыранă;
Çутă çула йĕрлесе
Тарпа пиçнĕ-хуралнă...
Шурă шăмсем аллинђен
Ђи кирлине вăрланă;

Аслăлăха авринђен
Халăх тытнă, çаклатнă.
Мăшкăл ĕçне пĕтерме,
Пурăнăça çĕнетме
Ĕмĕтленсе пурăннă.—
Пăлхав тума кар! тăнă.
Пĕрре çеç мар, темиçе,
Вĕсем йатнă пуçсене,
Анђах уснă вĕсене
Мул тĕрекĕ умĕнђе.
Халĕ акă майларĕç
Кăпитала ватаççĕ;
Калле-малле пăхмарĕç
Çĕнĕ çулпа утаççĕ.
Хресђенпеле ĕçлекен
Пĕрне пĕри палларĕç;
Вĕренекен, çар çынни
Çитсе тăђĕç-ал пађĕç.
Пурте харăс, пĕр пулса
Хĕрлĕ йалав çĕклерĕç;
Кăкăрпала йĕр туса
Тĕп хулана вĕçтерђĕç.
Епĕр йалта сисеймен,
Урăх çулпа утатпăр,
Ђуркўсенђе: „ей, ĕнен...“
Мурлă мула мухтатпăр.
Микулашăн кĕл-туса
Ђĕркуççийе çийетпĕр,
Пуçсем çине кĕл хурса,
Çўлти райа кĕтетпĕр.
Анђах... анђах, маннă шет,
Кĕл-туса та ырри çук;
Çав райсенђе кам ишет?
—Улпут,-пире вырăн çук.
Райа кĕрес тесессĕн
Малтан вырăн тупмалла,
Вырăн тупас тесессĕн
Мул хуçипе вăрçмалла.
Улпутсене, мурсене
Ĕнселесе тăкмалла,
Вĕсен пысăк çурђсене,
Райа хамрăн тумалла.
Пуп-аттесен сĕрĕмĕ
Аташтарат, ђунилли:
Куç-пуç, тăнсăр, ерехĕ...
Ăçта унта сисмелли?
Кив йĕркенĕн пиллĕхĕ
Райпа тамăк, ирсĕр ĕç—
Пурте мăшкăл хўтлĕхĕ—
Ўлĕм вĕсем пулаймĕç.
Сăнђăрланă пулин те,
Ĕмĕрлĕхе сыхайман;
Аташтарнă пулин те
Ĕмĕтсене татайман.
Хура халăх—ĕçлекен
Çапах çитсе аркатрĕç,
Çўлĕ паха çуртсенђен
„Шурă шăмма“ тасатрĕç.
Пысăк çурђĕ-ыр шкулсем
Халĕ ĕççын аллинђе,
Кунçул çутти-ăслăлăх
Вырăнаçтăр ун пуçне.
Çамрăк ђунсем, ђăвашсем,
Асăрхар-ха пур йенђен
Асап тўснĕ йăвашсем,
Тăнлăр, ыйтăр пуринђен.
Епĕр кунта, Хусана,
Ĕçпе килнĕ—ахаљ мар;
Çавăнпа та хăлхана.

Илтми туса ларас мар.
Тыр-пул акса тунăскер—
Пирĕн шăм-шак ђăтмалла,
Хура-шурра курнăскер—
Куç-пуç виттĕр курмалла.
Çиçĕм пире çутатрĕ,
Çул йупĕнђе тăратпăр;
Кивви ĕнтĕ çухалђĕ
Çĕнни йенне шăватпăр.

Ĕмĕртенпе шăтнăскерĕн
Тымаррисем нађар мар,
Ирсĕрлехпе кÿпнĕскерне
Татса ывăтма çăмăл мар,
Нÿрĕк пĕтмен, тĕтреллĕ...
Çитес кунăн хĕвелĕ
Çав хушăрах йалкăшат̆,
Хăй хÿттине йыхăрат̆.
Çынна сăнђăрлаканскер,
Ирсĕрлĕхпе пуйанскер—
Харам-пырсен самани—
Пут̆лантăрђĕ! Ма выртан?
Мăшкăл айне пулнăскер,
Асаплăха тÿснĕскер,
Вĕренесшĕн вăрçнăскер,
Хађ сиксе тăр ыйхăран!
Вĕренсе пыр, ăслăлан,
Тĕнђе аври умăнта...
Есĕ ăна пултаран,
Ил тĕнђене аллуна!..
Çак сассене илтеççĕ,
Ђăнлăхшăнне пелеççĕ,—
Çапах хăшĕ выртаççĕ,
Татах темĕн тăхтаççĕ,
Вăхăт кĕтмест, йулташсем,
Хĕрнĕ ђухне васкасђĕ;
Вăрăм... пĕтмен тымарсем
Пĕтĕм ђавса ывтасђĕ.
Ава, тĕттĕм çĕрсенђе,
Кăпиталăн йыттисем
Шăлĕсене хăйраса,
Ђупаççĕ-çке кунталла.
Каллех пусса илесшĕн
Мул тĕрекĕ пуç йатат̆;
Канлех, хуçан вилесшĕн
Йунне тăксах çапăçат̆.
Тĕрлĕ тискер хатĕрпе
Перет, тăкат̆... çунтарат,
Хĕрлĕ Совет йалавне
Йунпа çăват̆—çутатат̆.
Хĕвел çине ђунтанах
Çитсе сиксе ларасшăн;
Хĕрлĕ çара ђас-ђасрах
Çитсе тартса тăкасшăн.
Хăйаматпа персен те,
Пирĕн матур хĕрлĕ çар
Парăнас çук вĕсене,
Култарас çук тĕнђене.
Тÿсĕмлĕхĕ пĕтес çук,
Хĕвел ÿстер,-çимĕç пар;
Вара хăраса ÿкес çук
Тăшман, путлан! çулна пар.
Ку таранђђен шикленсе
Пытанмарĕ вăл тарса.
Канаш Раççей халăхне
Хăвармарĕ намăса.
Хăйĕн хĕрлĕ йалавне
Çирĕп тытрĕ аллине,
Пур йеннелле, йеррипе
Пысăклатрĕ утăмне.
Шур Колђђака тĕрмене...

Иркутскинҫе пĕтерҫĕ,
Улпутсене —ун ҫарне
Кĕл вырăнне вĕҫтерҫĕ.
Ҫутă йăнрал Теникkин
Мускав хули вырăнне,
Тинĕс хумне тĕл пулҫĕ,
Ҫарĕ тарса салаҫҫĕ.

Йӳтенĕҫ та кӳштерĕ—
Питĕрсĕрех йӳтерĕ;
Таҫта ҫӳрет суланса,
Укҫи ҫĕрет—сутăнса.
Вранкĕл, пансем, ытти те
Унтан тараҫ пур ҫĕрте.
Намăс ăшне ҫĕтнипе
Пуйан ҫупаť йут ҫĕре
Йăпăлтататť кушак пек
Укҫисене тыттаратť:—
Вăрҫăр хĕрлисемпе, тет.
Анҫах хĕрли парăнмаст.
Фронтра та вăл, тылра та
Канма-тăма вахăт ҫук,
Хĕрлĕ ăмăрт кайăка;
Хăшин тылра шухăш ҫук,
Кăшт та пулин пулăшма.
Пур ҫав, пурах тĕнҫинҫе
Ун йышши те сахал мар.
Ишет хăйĕн ĕҫкинҫе...
Тĕнҫе ҫунтăр,-кирлĕ мар.
Вĕри ҫĕре ҫамрăксем
Ун пек пулса ларас ҫук;
Ҫĕнĕ хĕвел хӳтлĕхне
Пулăшмасăр тăрас ҫук.
Ҫине тăрса, тăрăшса
Тылри ĕҫе тытăнар,
Мĕн пур ирсĕр нушана
Ҫак тĕнҫерен хăвалар.
Йут ҫĕрсенҫи халăха
Хамăр ҫулпа пыртарар,
Йун тăкасса, вăрҫасса
Ĕмĕрлĕхе хăвалас.
Вырăс, ирҫе, ҫăвашсем,
Мари, тутар, пушкăртсем
Пурте ҫунлă, пурте ҫын
Халĕ пĕр тан шутланаť.
Анҫах утăм пĕрре мар,
Хăшĕ кайнă маларах
Ҫăвашсенҫен ытларах
Вĕреннĕ те, ăслăрах.
Акă вĕсен ҫамрăксем
Клупсем уҫнă ытларах,
Политтĕккă шкулĕсем —
Сойуссем те йышлăрах.
Ҫавна кура, ҫăвашсем,
Епĕр мĕншĕн йулатпăр.
Ака вăхăҫĕ ҫитнĕҫке,
Мĕншĕн акма тухмастпăр.
Сикер, тăрар епĕр те
Аťăр, ҫăваш аҫисем.
Пирĕн те пултăр пур ҫĕрте
Клупсем, хамрăн сойусем.
Унта епĕр вĕренер
Пурлăх кунҫул тĕррине;
Пĕр ҫул ҫине ӳкерер
Пĕтĕм тĕнҫе ҫамрăкне.
Сотсиалисăм вăл мĕнне
Пур ҫынна та пĕлтерес;
Пĕтĕм тĕнҫе ĕҫҫынне
Пĕр ҫемйере ӳстерес.

*Хусан, 1921 ҫ.*

# Истеррори*)

*(Круçинсен револ̧утсиллĕ посçийĕнт̧ен).*

Вăл хĕп-хĕрлĕ халат тăхăнса йађĕ,
Вутхĕмлĕ куççулне вăл сирпĕтет;
Вăл сывă, çирĕп...—çивђĕ ун вăйхăвађĕ.
Çилтăвăл, çăмăр...—ăна ним тивеймест..

Пĕринђе ăна вут ту хăвађĕ**) çапса ўкерђĕ;
Пурнăç унăн çăварне тусан тултарђĕ.
Çĕнелнĕ шавсем хыççăн ђупрĕ те вăл—
Халавлă***) урама ђунтанах йуратрĕ.

Пĕр пĕђђен вăл,—вăл хура тĕттĕм çĕр
Ытамне ўксе, хăй ђунне çĕнетрĕ.
Сивĕ çил ăна виђкĕн кастарса
Урам хушшинђе пăхса ўстерђĕ.

Анђах,—вăл çапах çирĕп... телейсĕрсем пек
Хăрушă каçран шикленсе тăмарĕ;
Ўстерђĕ тивĕçлĕн патвар вăй-халне,
Кăмăлне çемçетсе пуçне усмарĕ.

---

*) Истеррори тесе круçинсем револ̧утсионера калаççĕ. Ку сăвва круçин, халĕ ВАПП пĕрлешĕвĕнђе тăракан çамрăк поет—Машашвилли Капкасра çырнă. Капкас халăхĕ питĕ хĕрўллĕ, вĕсен сăввисем те çавăн пек вĕресе тăраççĕ. Автăрĕпе пĕрле пурăннă ђух унăн пĕр сăввине вырăсла куçартăмăр, вара епĕ ђăвашла куçартăм. Вăл пирĕнне питĕ куçарасшăн.

**) Вулккан пек вăй, тенĕ автăрĕ.

***) Илĕртўллĕ, йĕркесĕр, аташтаракан урам.

*
* *

...Алăри киншал...хаклă çывăх тус!
Мĕн ђухлĕ инкеке, хуйхсуйха хупланă анпала;
Ун çинђех пиçрĕ халђхи вĕри йун,
Астиврĕ лайăх—астиврĕ киншал пурнăçа.

Унпала тиретĕн патшан ыр çуртне,
Унпалах виçетĕн тăшман кăкрине.
Киншал вăл—тăван, вăл хаклă йулташ.
Вăл мантарат̆ кил-çурта, çемйене...
Вăл ђĕнет çĕн çула.

*
* *

—Ей!..
Ей, патшасен, мăнтăрсен çуртĕнђи
Ыр ђунсем, харамсем!..
Татах йурлас-и? Кулас-и татах?..

—Ей, ђарăр шăрантма ройалђсен сассине:
Çитĕ савăнма, çитĕ çын çинђе ашкăнма!

Аванах пулђçке те çав,—йунне сăрахтарма,
Мусăксем каласа, ĕçкĕсем аван пуçтарма...

Анђах тимĕр пек çирĕп,
Патварăн çĕн паттăр—
ИСТЕРРОРИ килет.
—Ан макăр,
Ђухăн çын, ан йĕр!—Вăл çĕнет!
Киђемлĕ кунсем мар, анаслас вăхăт мар халђ,
Халĕ ĕç, хĕрӳ ĕç—кĕрешӳ пирĕн умра.

Кĕтме çук,—кĕтмĕпĕр! Хăрас тăвас мар,
Пурсăмăр тухар,—
Вĕçер урама...

Тахçанах хатĕр, хатĕр ес... Халĕ ес
Тăшмансем камне паллатăн, паллатăн ес;
Ан хăра тинех! Тыт киншал, тыт ес хĕç!
Сана кĕрешӳ, вутхĕм хаљ суранлĕ-и?
—Çук, суранлаймĕ!
Паттăрăн, çулăмлăн есĕ тух урама!
Ишсе антар, ан хĕрхен пуйансен твоређне.
Халĕ тасат! Тасатах кун-çулна,—
Тасат пур ун пек мурсенђен!

*
* *

Çакăн пек йурлаŤ паттăр истеррори,
ЙурлаŤ те, утаŤ çулăм кулли хыççăн;
Ишет авалхи тĕнђене вăл—ват супнă, кивĕ,
Кив кăмăл никĕсне вăл ишет...

Истеррори киншалĕ çĕкленђĕ çӳле,
Тĕллесе кăтартрĕ: „çаксене ишмелле!“
Акă престула, ĕмĕрлĕх тĕп тума,
Мĕн пур йенђен сапрĕç,
Сапрĕç престула йĕс-тăхлан çăмăрпа.

Аса илђĕ Истеррори авалхи вăхăта,
Марата... Танттона... Аса илђĕ хăй йухтарнă йуна.
— „Кирлех!.. Вăхăт та!..
Пуçларĕ йурра.
Шикленмесĕр йурлаŤ,—хăй утаŤ малалла.

Халĕ ĕнтĕ вăл
Тĕнђене кăтартрĕ револђутси хунарне,
Çĕклесе кăтартрĕ
Хăй киншалĕ вĕçĕнђи
Хĕрлĕ вут йалавне...

Кунçул çилтăвăлĕ тин тивеймĕ ăна,
Вăл паттăрăн пыраť ĕмĕтне тултарса.
Унăн парнасĕ*) —„Пулас Комунă,—
Ленин калани**), йе ешшафот***)?"

Утаť вăл, вăл—Октăпĕр хайарлăхĕ,
Вăл хаљ мĕн пурне курăнаť.
Унăн аллинђе çивђĕ хĕç-пăшал.
—Ей, ан та кĕтĕр унтан ӳкĕнӳ!
Вăл хĕрхенӳсĕр, вăл ђĕмсĕр „усал"!

Ĕнер çеç акă вăл, ĕнер kaçхине,
Хăйĕн пиђђĕшнех—шпион пулнăшăн,
Помпăпа персе, лапђăтса хуђĕ,
Вăл, çемйешĕн мар, пуриншĕн пурнасшăн.

Ăна урнă та, ухмах та, терĕç.
Анђах... анђах, вăл вăйсăр,
Шиклĕ ђун, тесе,
Ăна никам та, нихçан та калаймĕ.

---

*) Парнас — хĕрӳллĕх, вăй паракан вырăн (поетсен—хастарлăх вĕри çăл-куçĕ).

**) Ленин вĕрентни, çыраканĕ ăна Ленин çамки тенĕ.

***) Е ш ш а ф о т—айăплă çынсене персе, йе çакса вĕлермелли вырăн.

* *
*

Я буду сед, но комсомольцем
Останусь юный навсегда!

**А. Безыменский.**

Аллăмăрсем çинҫе хĕвел ирĕлет...
Ех, савăнсамҫҫĕ, тăван аннем,—савăнсам,
КОМСОМОЛ! Ӳснĕçем ӳсет савнă ывăлу;
Çирĕмвиççеллех ҫупса кĕҫĕ вăл, хавассăн йурлаť:
„Ҫăнахах та-çке, ҫăн вăл—
Питех те аван хум çинҫе.
Иртрĕ йанравлă çил-тăвăл,
„КИМ"—çĕнĕ ким тухрĕ тинĕсе..."
Пăшăлтататççĕ хумсем,—йурлаççĕ:
Асăнаççĕ вĕсем курни-илтнине.
Ҫеҫен. Вăй-выљăн шевлейĕн ҫӳхенсе,
Хуллен çеç ыталаççĕ хумсем пĕр пĕрне.
Асăмрах çавă тăвăллă, йанравлă кунĕсем.
Епĕ те йурлатăп, пĕт пĕтĕм асăнатăп вĕсене.
Камăн йурлас килмĕ çамрăксен йуррине?
Хастарăн кам утмĕ-ши вĕсемпе?
Хушăран—тăвăллă, хушăран—тӳлек,
Ёнер:—кӳр пăшал! Пайан—кĕнеке!..
Çамрăксем йурлаççĕ, хумĕ кĕвĕлет—
Ҫăшăлтаттарҫĕ „КИМ"-ЛЕНИН çулĕпе.
Вăхăт та шăваť. Шăваççĕ çулĕсем те...
(Халĕ ёнтĕ ман пĕр ҫĕҫĕ шăлĕ те çук).
Çапах та КИМ çинҫе, çамрăксемпех йарлатăп.
Хастарлă ҫунсенҫен уйрăласси шутăмра та çук

Хакĕ 35 пус.